Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

23 (7877) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи апрель (ака) уйăхĕн 2-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

## Маттур хĕрарăм

***Районта ял хуçалăх ĕçĕ тĕп выранта пулнăран пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ĕçĕ-хĕлĕпе те хаçат вулакансем интереслесех тăраççĕ. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ палăртнă «Агропромышленноç комплексне аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕ ял хуçалăх предприятийĕсене, ялта пурăнакансене çĕнĕ аталану çулĕпе ĕçлеме вăй пачĕ. Хăйсем ку таранччен пурнăçланă ĕçсем çине нацпроект хресченсене çĕнĕлле пăхма хистенине, кашнин умнех çĕнĕ тĕллевсем лартса çакна валли урăхла ĕç мелĕсем алла илме ыйтнине куратпăр.***

***Аталану çулĕпе пыракансем производствăна çĕнĕ технологисем кĕртеççĕ, вĕсем патĕнчен энерги перекетлекен техника ял хуçалăхне килет.***

***Çанă тавăрса ĕçе кӳлĕннисен ĕç кăтартăвĕ ӳсрĕ. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Валентина Алексеевна Димитриева 12 çул (унччен 7 çул Панклири сĕт ферминче вăй хунă) «Ударник» хуçалăхăн Вăрманкассинчи сĕт ферминче ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессипе ĕçлет. Çав хушăрах маттур хĕрарăм вылльăх тухтăрĕнче те тимлет. Пĕлтĕр унăн тăрăшулăхĕпе фермăра 100 ĕне пуçне 90 пăру илме пултарнă.***

**А. БЕЛОВ** сăн ӳкерчĕкĕ.



Комисси ларăвĕ

## Лăпланма иртерех-ха

***Çак кунсенче йĕркене пăсассине асăрхаттарас, наркотик сарăлассине хирĕç кĕрешес, йĕркепе тивĕçтерес ĕçсен комиссийĕсен пĕрлехи анлă ларăвĕ пулса иртрĕ. Ăна комиссисен ертӳçи, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пычĕ. Лару чылай ыйтăва пăхса тухрĕ.***

### Йĕплĕ карта пултăр аякра

Йĕплĕ карта леш енне лекме ăс-тăн нумаях та кирлĕ мар. Анчах та маларах преступлени туса йĕплĕ карта леш енче пулнă çынна кулленхи пурнăç юхăмне кĕме тата ĕç выранĕ тупса малашнехи пурнăçа йĕркелеме çăмăлах та мар, енчен те хăй тăрăшмасть пулсан пушшех те. Ирĕке тухаççĕха, анчах та тăван кĕтесрен аякра иртнĕ куна манма ĕлкĕреймеççĕ, каллех йĕркене пăсас çул çине тăма пикенеççĕ. Статистика кăтартăвĕ вара пачах та лăпкă мар, преступленисен ытларах пайне маларах йĕркене пăснă çынсемех тăваççĕ. Çак кăтарту районта палăрмаллах ӳсрĕ. Апла пулсан çакă профилактика ĕçне вăйлатмалли, ял тăрăх пуçлăхĕсен ответлăхне ӳстермелли тата общественноçăн пĕрлехи тăрăшулăхне çивĕчлетмелли пирки калать. Ку ĕçсем пирки общественăлла хăрушсăрлăх милици уйрăмĕн ертӳçи В.А.Григорьев тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

– Тин çеç ирĕке тухнă çынна пирĕн пĕрлехи тăрăшулăхпа çирĕп контроллесе тăма тивет, мĕншĕн тесен вĕсем каллех преступлени çулĕ çине çăмăллăнах тăма пултараççĕ. Çавăнпа та вĕсене кулленхи ĕçе явăçтарма тăрăшмалла. Паянхи кун тĕлне вара ĕç выранĕсем ял хуçалăхĕнче сахал мар. Пурăнас текеншĕн ĕç выранĕ пур, – терĕ Юрий Александрович умра çур аки, хĕрӳ ĕç çи пуçланассине, апла пулсан çĕр ĕçĕнче вăй хума ĕçлекен алă ытларах кирлĕ пулнине палăртса.

Пурăнма районта тивĕçлĕ ĕç укçи ĕçлесе илеймĕн, çавăнпа та Мускава ĕçлеме каятпăр тени çăлăнăç хуравĕ мар. Шыракан кирек ăçта та ĕç выранĕ тупать. Акă паянхи куна илсен Афанасьев фермер тата Васильев предприниматель учетра тăракан çынсене хăйсен ĕçне явăçтарма тăрăшаççĕ.

### Çул çитмен çамрăксем кулленхи тимлĕхре

Çамрăксем хăйсенчен аслăраххисемпе туслашни, вĕсен хăтланăвĕсене ăша хывни чылай чухне тĕрĕс çул-йĕртен пăрăнма хистет. Кăçалхи икĕ уйăхра кăна çул çитмен çамрăксем тунă преступленисене иртнĕ çулхипе танлаштарсан ытларах регистрациленĕ. Çул çитмен çамрăксем тунă преступленисем шайĕ районта 5,6 процентпа танлашать, республика кăтартăвĕ 4 процент. Мартăн 1-мĕшĕ тĕлне районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен пайĕнче учетра 42 çамрăк тăрать. Çул çитмен çамрăксем тĕлĕшпе административлă 51 протокол çырма тивнĕ.

(Вĕçĕ 2 стр.)

Район администрацийĕнче

## Тăрăшса вăй хунăшăн

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнчи 211 № йышăнăвĕпе потребкоопераци тытăмĕнче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн Мăн Сĕнтĕр райповĕн тĕп бухгалтерне **Нина Макаровна СОРОКИНĂНА** тата пуш уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 214 № йышăнăвĕпе «Моргаушское» муниципаллă унитарлă предприятин инженер-энергетикне **Юрий Власович МАКАРОВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи мартăн 24-мĕшĕнчи 241 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Эльвира Егоровна ВАСИЛЬЕВĂНА**, Ильич яч. хис. хуçалăхăн выльăхсен пăхакан рабочине;

– **Борис Федорович СТЕПАНОВА**, Ильич яч. хис. хуçалăхăн рабочие пулăшаканне.

Лару

## Ыйтăвĕ пĕлтерĕшлĕ пулин те...

Район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи мартăн 18-мĕшĕнчи 223 № йышăнăвĕпе районта апрелĕн 1 – 30-мĕшĕсенче ĕç сыхлавĕ енĕпе уйăхлăх иртет. Çавна май апрелĕн 1-мĕшĕнче ĕç сыхлавĕн районти канашĕн анлă ларăвне иртнерни те унпах çыхăнни паллă. Унта пăхса тухма кĕртнĕ ыйтусен анлăшĕ те пĕчĕк мар. Ăнланмалла, ку вăл черетлĕ лару е урăх мероприяти мар-çке. Кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусем хушшинче районăн 2011 çулхи пĕрремĕш кварталти ĕçĕ-хĕлĕн итогĕсем те, ĕç условийĕсемпе ĕç сыхлавĕн иртнĕ çулхи итогĕсемпе умри задачăсем те, предприятисемпе организацисенчи санитарипе эпидемиологи лару-тăрăвĕпе ĕçлекенсен медицина тĕрĕслевне иртересси те, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессии те, çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх ыйтăвĕсем те.

Ларăва координаци канашĕн членĕсем, предприятисемпе организацисенчи ĕç сыхлавĕшĕн ответлă пулса тăракан инженерсемпе специалистсем хутшăнчĕç.

Хăйĕн докладĕнче районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Н. Кузьмин ĕç сыхлавне тивĕçтерессин иртнĕ çулхи итогĕсене тишкернĕ май ку тĕлĕшпе выранĕсенче пур структурăсемпе органсен те пĕрле тачăрах çыхăнса ĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине тĕрĕсех палăртрĕ. Коллективлă килĕшӳсене йĕркене кĕртсе çирĕплетесси çине те хăш-пĕр çĕрте ячĕшĕн ĕç выранне кăна хураççĕ. Ĕç сыхлавне тивĕçтерессипе çирĕплетнĕ йĕркесене пăснă тĕслĕхсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Ку вара, паллă ĕнтĕ, ырри патне илсе пымасть.

(Вĕçĕ 2 стр.).

Районти прокуратурăра

## Усал йăла аякра тăтăр

Тĕрлĕ шайри сут-илӳ точкисенче наркотикпа усă курма юраман туртмалли ытти хутăшсем сутнине, сĕннине прокуратура тата ку енĕпе яваплă ытти ĕçченсем тăтăшах çирĕп тĕрĕслесе тăраççĕ.

Çавна май усал йăла-йĕркене, тĕрлĕ хĕç-пăшала, сирпĕнекен хутăшсем сарăлассипе кĕрешме ятарлă ĕç планĕ хатĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе районта черетлĕ тĕрĕслев пулса иртрĕ, яваплă ĕçченсем Муркаш пасарĕнчи, Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен суту-илӳ точкисене, аптекăсене тĕрĕслерĕç. Усă курма юраман веществосене пропагандăланă, наркотика тата пуçа минретекен ытти веществосене рекламăланă, вĕсене çул çитмен çамрăксене сĕннĕ фактсем тĕрĕслев вăхăтĕнче тĕл пулман.

**Пичете районти прокуратура материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Ĕçтеше саламлатпăр

Район хаçачĕн корректорĕ **Ольга Филипповна СУВОРОВА** пичет отраслĕнче 40 çула яхăн вăй хурать.

РФ Çыхăну тата массăллă коммуникаци хатĕрĕсен министрĕ И. Щеголев профессилле пысăк ăсталăхшăн тата нумай çул хушши тухăçлă ĕçленĕшĕн Ольга Филипповнăна Хисеп грамотипе наградăларĕ.

Пирĕн хастар ĕçтеше çак пысăк наградăна тивĕçнĕ ятпа саламлатпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

Саламлатпăр!



Юратнă мăшăра, аттене, ăш пиллĕ кукаçине, асаттене – Катăкуй ялĕнче пурăнакан **Григорий Александрович АЛЕКСАНДРОВА** 80 çулхи юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, пархатарлă кун-çул сунатпăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ сана юратакан, хисеплекен çывăх çыннусенчен ан татăлтăр. Эсĕ пурришĕн эпир савăнатпăр, санпа мухтанатпăр, чĕререн сума сăватпăр.

Çирĕп пултăр ялан сывлăху,
Чечеклентĕр пĕрмай пурнăçу.
Тата та нумай çул эс пурăнсан,
Пире пит лайăх эс çумра пулсан.

**Хисеплесе, чунтан юратса: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсемпе вĕсен ачисем.**

Мăн Сĕнтĕр салинче пурăнакан хаклăран та хаклă, юратнă **Александра Павловна НИКИФОРОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Апрелĕн 2-мĕшĕнче 90 çул тултарать. Пурăнас ĕмĕрӳ вăрăм пултăр, яланах сывлăхлă пул, , малашне те нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăнмалла пултăр. Ватлăх çулне пăхмасăрах пире халĕ те нумай пулăшатăн. Пуриншĕн те тав сăмахĕ каласа çĕре çити пуç таятпăр.

Ан хурлан эс, ан хурлан
Ватлăх пăхнăшăн куçран,
Ватлăх пăхнăшăн куçран
Питĕ хытă ан хурлан.

**Салампа: Никифоровсен, Горшковсен, Епишинсен, Илугинсен, Федоровсен, Шереметьевсен çемйисем.**



Юратнă çыннăмăрсене, аттепе аннене – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Маргарита Михайловнăпа Владимир Моисеевич ИСАКОВСЕНЕ** пĕрлешнĕренпе 35 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Эпир сире питĕ юрататпăр, юнашар пурришĕн савăнатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Сĕтел çинчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр, кĕрекĕр яланах тулли те пуян пултăр. Ылтăн туйччен пĕрле шăкăл-шăкăл килĕштерсе пурăнăр.

**Пысăк салампа: ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, 3 мăнукĕ, мĕн пур тăванĕ.**

Пирĕн хисеплĕ те юратнă мăшăр, атте, асатте тата маçак – **Леонид Петрович ШУРНОВ** Шуркасси ялĕнче кун кунлать. Ĕç стажĕ питĕ пысăк унăн – паллă шофер, рационализатор, изобретатель, вырăнти Кулибин теççĕ ун пирки.

Çывăх çыннăмăр апрелĕн 1-мĕшĕнче çуралнă кунне паллă турĕ. 80 çул тултарнă ятпа эпир ăна чун-чĕререн саламлатпăр. Пирĕншĕн ялан ырă тĕслĕх эсĕ, хаклă çыннăмăр. Ырлăх-сывлăх сана, тулли телей, çемьере килĕшӳ, канлĕ ватлăх, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Тĕпренчĕкӳсемпе савăнса кăна пурăнмалла пултăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

**Саламласа: мăшăрĕ Зина, ывăлĕ Борис, кинĕ Нина, хĕрĕ Ира, мăнукĕсем Оксана, Светлана, Гриша, Женя, кĕрӳшĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем Ирина, Григорий, Никита тата тăванĕсем.**

Çырăнтару

**Хаклă вулаканăм!**

**Райхаçата иккĕмĕш çур çултан илсе тăма çырăнтарас тапхăр малалла пырать. Çырăнтару хакĕ унччченхиех – 191 тенкĕ те 70 пус (ултă уйăха).**

# Медаль тата иккĕмĕш степеньлĕ диплом



*ЧР Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви çулленех «Эпĕ – тĕпчевçĕ» конкурс ирттерет.*

*Районти конкурс çĕнтерӳçи – «Путене» ача садне çӳрекен Света Рожкова кăçал Шупашкарти шкул тулашĕнчи ĕçсен «Эткер» центрĕнче иртекен Раççей конкурсĕн регионти тапхăрне хутшăнма тивĕç пулчĕ. Шкул çулне çитмен ачасем тата кĕçĕн классенче вĕренекенсем хушшинче физикăпа техника енĕпе çырса хатĕрленĕ проектне ăнăçлă хӳтĕлерĕ вăл.*

*Конкурсра хăй ӳсĕмĕнчи тантăшĕсемпе ăмăртса медаль тата иккĕмĕш степеньлĕ диплом çĕнсе илме пултарчĕ.*

**Л. ЩУКИНА,**
**«Путене» ача сачĕн воспитателĕ.**

Сирĕн ыйтусене хуравлатпăр

## Комисси татса парать

**– Манăн аттепе анне иккĕшĕ те вăрçă участникĕсем. Ялта хăйсен пурăнмалли çуртне çамрăк чухнех лартнă. Атте çĕре кĕнĕ ĕнтĕ, 89 çула çитнĕ анне пĕчченех пурăнать. Çурт-йĕр юхăнса çитнĕ, юсав ĕçĕсем туса ирттермелле. Анне пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма субсиди илме пултарать-ши?**

**К. ПЕТРОВА.**

– РФ Çурт-йĕр кодексĕн 51-мĕш статйипе килĕшӳллĕн çыннăн пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма кирлĕ условисенчен пĕри вăл ку çуртра йĕркеллĕ пурăнма май çукки пулса тăрать. РФ Правительствин постановленийĕпе килĕшӳллĕн çуртра пурăнма май çуккин е май пуррин ыйтăвне ятарласа çав тĕллевпе йĕркелекен ведомствăсем хушшинчи комисси татса парать.

Вырăнти самоуправлени органĕ çирĕплетнĕ йĕркепе муниципаллă çурт-йĕр фончĕн пурăнмалли çурчĕсен пахалăхне хак пама комисси йĕркелет. Комисси йышне вырăнти çак самоуправлени органĕн представителĕсене кĕртеççĕ.

Çурт-йĕр пурăнма юрăхсăрри пирки заключени илес пулсан вырăнти самоуправлени органне пырас пулать.

**– Аннен харпăр хăйĕн уйрăм çурчĕ. Унта нимĕнле хăтлăх мелĕсем те çук. Вăл 80 çулта ĕнтĕ, вăрçăра вилнĕ салтак мăшăрĕ, пĕчченех пурăнать. Йĕркеллĕ хăтлă çурт-йĕр илме пултарать-и вăл?**

**С. КАЗАКОВА.**

– РФ Правительствин 2006 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче йышăннă 47 № постановленийĕн 12-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн пурăнмалли çурт-йĕрте инженери системи (электричество, сивĕ тата вĕри шыв, шыв юхса тухмалли, ăшă парса тăни тата вентиляци, газ кĕртнĕ районсенче унсăр пуçне газ та) пулмалла. Централизациленĕ инженери сечĕ çук вырăнсенче пĕр тата икĕ хутлă çуртсенче водопровод е канализаци пулмасан та пултарать.

Хăтлă çурт-йĕр илес ыйтупа вырăнти самоуправлени органне пыма пулать. Çурт пурăнма юрăхсăрри пирки вăл хак парĕ.

**Район прокуратурин материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Асăрханăр, ан улталанăр

# Уссине пĕлмесĕр ан туянăр

***Ултав серепине лекме йывăрах та мар. Халăха ултавлă тĕрлĕ тавар сĕнекен йышланчĕ. Биологиллĕ активлă хутăш (БАД) туянасси, сутасси анлă сарăлчĕ. Хăш чухне вара тавар туянакан аллине суррогат лекесси те иккĕлентермест. Шел пулин те сиплевпе анлăрах усă курас текенсем хушшинче инвалидсем ытларах тĕл пулаççĕ. Çавăнпа та халăха асăрхаттарас тĕллевпе хаçат редакцине Роспотребнадзор управленийĕн территори уйрăмĕн тĕп эксперт специалистне Глафира Григорьевна Воробьевăна çӳлерех асăннă ыйту тавра калаçма чĕнтĕм.***

– Чăнах та юлашки вăхăтра пирĕн пата та ку енĕпе шăнкăравлакан йышланчĕ. Халăх пирĕнтен тĕрлĕ сĕнӳ, информаци ыйтать. Шел пулин те ытларах чухне çакăн йышши препарата туянакан улталанать. Анчах та ултавлă, асамлă сиплев хăш чухне кĕсьене çӳхетсе кăна хăварать, усси вара иккĕленӳллĕ. Суррогат сĕнекен сутуçă тавара ытларах сутас тĕллевпе компенсаци тӳлевĕ шантарма пултарать. Ултавçă сĕнекен тавар пирки тулли те тĕрĕс информаци çук. Çавăнпа та тавар туянакан правине хӳтĕлеме те йывăр.

Суррогатлă биологиллĕ активлă хутăш çынна палăрмаллах пысăк сиен кӳрет, уйрăмах сывлăх енчен. Раççей Федерацийĕн «О мерах по упорядочению государственного регулирования цен (тарифов)» йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн халăх усă куракан хăш-пĕр тавар хакне тĕрĕслемелли ятарлă перечень хатĕрленĕ. Анчах та ваккăн сутмалли пур тавар та çав перечене кĕмест, вăл шутра биологиллĕ активлă хутăш та.

Саккунпа килĕшӳллĕн ăна рекламăланă чухне хăш-пĕр йĕркене пăхăнма тивет. Рекламăра биологиллĕ активлă хутăш эмел пулнине ĕнентермелле мар. Çавăн пекех çак хутăша усă курнипе уйрăм çын сипленнине е унăн сывлăхĕ лайăх еннелле сулăннине тата вăл çавăншăн тав сăмахĕ каланине уйрăм тĕслĕхпе çирĕплетмелле мар. Реклама тексчĕ тĕрĕс апатлануран хăтăлма хĕтĕртмелле мар. Енчен те эсир биологиллĕ активлă хутăш пирки суя, пулма пултарайман тĕрлĕ реклама асăрхатăр пулсан антимонополи службин федераллă управленийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмне (8352) 58-42-08 номерпе шăнкăравласа пĕлтерĕр.

Уйрăм çын шанчăкĕпе тата айванлăхĕпе усă курса вăл е ку тавара вăйпа сĕнни, туянма хистени вара саккунпа килĕшсе тăмасть. Енчен те сире çакăн йышши тĕслĕхсемпе тĕл пулма тӳр килсен хăвăр вăл е ку тавара туяннине çирĕплетекен документсемпе йĕрке хуралçисем патне пырăр е шăнкăравлăр. Биологиллĕ активлă хутăшпа усă куриччен врачпа канашлани кирлĕ.

Биологиллĕ активлă хутăша апатпа пĕрле организма тĕрлĕ витаминпа пуянлатма тата çирĕплетме, хăш-пĕр чир-чĕре пусарма, вар-хырăм микрофлорине йĕркелеме усă кураççĕ. Санитари правилипе килĕшӳллĕн БАД упаковки çинче унăн тулли ячĕ, ăна хатĕрлекенĕн тавар палли (пур пулсан),техника тата норматив докуменчĕн палăртăвĕ, ăна мĕнрен тата хăçан хатĕрлени, усă курмалли срокĕ тата мелĕ, ăçта хатĕрленин адресĕ, телефон номерĕ пулмалла. Патшалăх регистрацийĕ витĕр тухман, санитари правилипе килĕшсе тăман, усă курмалли срок тухнă, этикеткăсăр БАД сутлăха кăлармаççĕ. Вăл е ку йышши тавара туяннă чухне асăрханулăрах тата тавар туянакана ултав, суяран хăтарас тĕллевпе Роспотребнадзор управленийĕн территори уйрăмĕн ĕçченĕсем тимлĕрех пулма асăрхаттараççĕ. Çанталăк ăшă еннелле сулăннă май вĕсем ялсене ытларах тухма пуçлĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Лару

# Ыйтăвĕ пĕлтерĕшлĕ пулин те...

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1 стр.).**

Ĕç хăрушсăрлăхĕ пирки калаçни пуш параппан çапни мар. Ыйтăвĕ чăнах та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен çакă вăл чи малтанах çынсен, ĕçлекенсен сывлăхĕпе, пурнăçĕпе çыхăннă. Ларăва хутшăнакансен пассивлăхне, ĕç сыхлавне тивĕçтерессипе чĕрере мĕн пухăннине пĕрле татса пама тăрăшманнине вара ĕç хăрушсăрлăхĕшĕн ответлă пулса тăракан специалистсенчен ытларахăшне ку ыйту ытлашши канăç паманнипе кăна ăнлантарма пулать пулĕ. Çапла палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов.

Юрий Александрович районăн кăçалхи пĕрремĕш кварталти экономикăпа социаллă аталанăвĕн итогĕсемпе паллаштарчĕ. Ырă еннелле палăрăмлă улшăнусем çук мар. Уйрăмах промышленность çирĕппĕнех ура çине тăма тытăнни куç кĕрет. Ял хуçалăхĕнче те, кăçалхи пысăк йывăрлăхсене пăхмасăрах, каялла утăмламан темелле. Патшалăх енчен те пулăшу çук мар. Иртнĕ çул ял хуçалăхне пулăшу шучĕпе пĕтĕмпе 136 миллион тенкĕ уйăрнă. Çак пулăшăва ял хуçалăх предприятийĕсем кăна мар, уйрăм çынсен хуçалăхĕсем те туйма тытăнчĕç.

Ĕç тухăçлăхĕ пирки калаçнă май çавна та асăнмасăр май çук. Ку енĕпе ырă еннелле улшăнусем тăвас пулсан ĕçлекен валли йĕркеллĕ условисем туса парас пулать. Вăя парса ĕçлеме те, кирлĕ пек канма та майсем пулччăр.

Çынсен сывлăхĕн ыйтăвĕ шухăшлаттарать. Ку енĕпе лару-тăру çивĕч-ха.

Кун йĕркине кĕртнĕ ытти ыйтусемпе те калаçу пулчĕ ларура. Ĕçлекенсен медицина тĕрĕслевне вăхăтра тата йĕркеллĕ ирттерни, вырăнсенче пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнни пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕç, ытти ыйтусене хускатрĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Комисси ларăвĕ

# Лăпланма иртерех-ха

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1 стр.).**

– Çул çитмен çамрăк куллен тимĕлх ыйтакан сий шутланать. Çавăнпа та пирĕн ĕçченсем ку тĕлĕшпе тăтăшах профилактика ĕçне ирттереççĕ. Анчах та йывăр лару-тăрăва йĕрке хуралçи вăйĕпе кăна çĕнтерейменĕн. Кунта вара пурин тимлĕхĕ те витĕм кӳмелле. Икĕ уйăхра вĕрентӳ заведенийĕсенче право ыйтăвĕсемпе 23 лекци ирттернĕ, çул çитмен çамрăксем енĕпе ĕçлекен пайра учетра тăракан çамрăксемпе 11 калаçу ирттернĕ. 28 çамрăка хăйсем пурăннă вырăнта тĕрĕсленĕ. Çамрăксем хушшинчи преступленисен шайне чакарас мар тесе вĕсем йышлă пухăнакан вырăна тăтăшах рейдпа тухса çӳретпĕр, 17 тĕрĕслев ирттертĕмĕр, – терĕ обществăлла хăрушсăрлăх милици уйрăмĕн ертӳçи В.А.Григорьев çамрăксем тĕлĕшпе ытларах тимлĕх уйăрмаллине палăртса.

**Эрехе çĕнтерейменĕн, вăл...**

Эрех аварĕ тĕпсĕр, никама тиркемест, йăлт хăй патне илĕртет. Çавăнпа юлашки вăхăтра эрехпе айкашасси, вăл шутра хĕрарăмсем тата çамрăксем хушшинче ытла та хăвăрт ӳссе пырать. Эрех ĕçнĕ çын йĕркене пăсас, преступлени тăвас çул-йĕр çине çăмăллăнах тăрать. Икĕ уйăхра кăна ӳсĕрле 22 преступлени тунă, иртнĕ çулхи çак тапхăрта вара ку кăтарту 9 пулнă. Учета илменнисем тата миçе-ши? Эрех хĕтĕртнипех çемьере тăтăш харкашу та куççуль. Шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем эрехпе суту-илӳ тăвассине, обществăлла вырăнта ӳсĕрле йĕркене пăсассине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе япăх мар ĕçлеççĕ, çапах та усал йăла-йĕркене пĕр самантрах аркатаймăн çав. Эрех ĕçсе административлă майпа йĕркене пăснă 354 (349) преступлени тупса палăртнă. Обществăлла вырăнта ӳсĕр çӳренишĕн, йĕркене пăснишĕн 337 (335) протокол çырма тивнĕ.

Эрех енне сулăннă çынсене общественноç умĕнче сӳтсе явни те усăллă пулассине шанас килет. Паянхи кун тĕлне шалти ĕçсен пайĕнче учетра 284 çын тăрать, вăл шутра маларах судпа айăпланнă хыççăн ирĕке тухнă 42 çын, срокчен условнă майпа ирĕке тухнисем 20, алкоголизм чирĕ шала кайнисем 30 çын, 6 наркоман.

Иртнĕ çул район больницинче алкоголизм чирĕ шала кайнипе 64 çынна сиплеме тивнĕ, 51 пациента республикăри наркологи диспансерне сиплеве ăсатнă. Хĕрарăм эрехпе хăвăртрах туслашать, анчах та ăна сиплеме йывăртарах та. Малашнехи пурнăç вара хĕрарăмран ытларах килет, çавăнпа та ача-пăча кун-çулне эрехпе ылмаштарни ырри патне илсе пыманни куç кĕрет.

– Эрех чирĕ шала кайнă çынна сахал мар сиплеме тивет пирĕн патра. Пĕр чирлĕ çыншăн кăна 1-2 эрне хушшинче 30-50 пин тенкĕ тăкаклама лекет хăш чухне. Енчен те çак укçа-тенкĕне ытти чирпе нушаланакан валли е ача-пăча уйрăмне хушма пулăшу уйăрнă пулсан вырăнлăрах пулнă пулĕччĕ, – терĕ тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г.Данилов алкоголизм чирĕ чăн-чăн хăрушлăх пулнине тата унпа май пур таран пĕрлехи вăйпа кĕрешмеллине палăртса.

Ку енĕпе профилактика ĕçне медицина ĕçченĕсем, йĕрке хуралçисем тата ытти ĕçченсем ăнăçсăр çемьесенче, шкулсенче уйрăм калаçусем ирттереççĕ.

**«Профилактика ĕçĕ пĕлтерĕшлĕ, анчах та унпа кăна çырлахмалла мар»**

Ял тăрăхĕсенче профилактика ĕçне ирттересси ырă йăлана кĕчĕ. Пĕрремĕш кварталта çак ĕç графикпа килĕшӳллĕн 11 ял тăрăхĕнче иртрĕ. Ăнăçсăр çемьесенче тăтăшах асăрхаттару, тĕрĕслев ĕçĕсем иртеççĕ. Ятарлă комисси çавăн йышши 156 çемьере пулнă, тĕрлĕ ыйтупа консультаци панă. Пурăнма питĕ йывăр условиллĕ йывăр çемьери 10 ачана Улатăр районĕнчи ятарлă санаторие вырнаçтарнă.

Административлă комиссие 69 административлă ĕç тăратнă, айăплисене явап тыттарнă. Хуçалăхсенче тирпей-илем йĕркине пăхăнманшăн 8 çын тĕлĕшпе ĕç тăратнă, вĕсенчен 5-не асăрхаттарнă, 2 çынна штраф тӳлеттернĕ. Йытăсене саккун ыйтнă пек тытман 52 çынна 26000 тенкĕ штраф тӳлеттернĕ. 27 ашшĕ-амăшне тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаншăн 6750 тенкĕ штрафланă. Саккунпа килĕшӳллĕн 22 сехет хыççăн çул çитмен çамрăксен урама, обществăлла вырăна, клуба тухса çӳреме юрамасть, çакăншăн ашшĕ-амăшĕ ответлă. Ку тĕлĕшпе пĕр çынна асăрхаттарнă, 6-не штраф тӳлеттернĕ. Çул çитмен çамрăка клуба е ытти обществăлла вырăнта пулма ирĕк панă ертӳçĕне те пуçран шăлмаççĕ, 3-не 1 пиншер тенкĕ штраф тӳлеттернĕ.

– Профилактика ĕçĕн пĕлтерĕшĕ пысăк, анчах та пирĕн унпа кăна çырлахса лармалла мар, çак ĕçе ытти ĕçченсене те явăçтармалла. Анчах та ĕçе ырă енне улăштарас пулсан ял тăрăхĕсенче куллен тимлемелле, – терĕ Ю.А. Иванов.

Çавăн пекех пĕрлехи ларура экстремистла акцисем, диверсипе террористла актсем пулассинчен сыхланас, обществăлла хăрушсăрлăха йĕркелес тĕлĕшпе тунă тата малашне тумалли ĕçсем пирки район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру секторĕн ертӳçи Н.П. Милютин тухса калаçрĕ. Социаллă пĕлтерĕшлĕ объктсенче, халăх йышлă пухăнакан вырăнсенче черетсĕр хушма тĕрĕслевсем ирттерни те питĕ вырăнлă пулмалла. Çакă тата ытти ыйту тавра калаçу пулчĕ анлă ларура.

**Р. МАКАРОВА.**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Вăрă акатпăр

Çăмăл, паха тăпрана вăрăсене çак тарăнăша акаççĕ: салат – 0,5 см; кишĕр, петрушка, çарăк – 1-1,5 см; редис – 1-2 см; чернушка сухан – 1,5-2 см; хăяр – 2-3 см; кăшман, пăрçа, кабачок, фасоль – 3-3,5 см; кавăн, нимĕç пăрçи – 3-4 см.

Выльăх тухтăрĕпе калаçатпăр

## Пасара тухаканăн мĕн пĕлмелле?

***Ял çыннисем килти хушма хуçалăхсене анлă аталантарнă май кулленех район территорийĕнчи пасарсене выльăх-чĕрлĕх тата ӳсен-тăран продукцийĕ йышлă тухать. Ку лайăх, анчах çакăн хысĕнче халăх сывлăхне сиен кӳме пултаракан хăрушлăх та пытанса тăрать. Çакна сутма тухаканăн та, тавар туянма пыраканăн та асрах тытмалла.***

***Саккунпа килĕшӳллĕн пасарсене тухакан пĕтĕм апат-çимĕç продукцийĕн санитари тĕлĕшĕнчен пахалăхлă пулнине çирĕплетме обязательнăй тĕрĕслев витĕр тухмалла.***

Килти хушма хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче тата ял хуçалăх производство кооперативĕсенче выльăх продукчĕсемпе суту-илӳ калăпăшĕ пысăк пулнăран кашни ял тăрăхĕнчех патшалăх ветеринари участокĕсем пур. Апат-çимĕç пахалăхне пăхса тăма ветеринари учрежденийĕсен специалисчĕсене хушнă. Район территорийĕнче икĕ пасар ĕçлет: Муркашра тата Мăн Сĕнтĕрте. Кунти продуктсен пахалăхне выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ветврачĕсем тата Мăн Сĕнтĕрти ветлечебница ертӳçи пăхса тăраççĕ.

Пасарсенче апат-çимĕç продукчĕсем сутма çак йĕркене пăхăнмалла:

– промышленноçра кăларнă ашран тунă хатĕр изделисемпе, сĕт тата сĕт продукчĕсемпе, консервăсемпе, чăх çăмартисемпе тата ыттисемпе сутă тума çав продуктсен пахалăхĕпе хăрушсăрлăхне çирĕплетекен документсем пулмалла;

– килти хушма хуçалăхран пусса тирпейлесе тухнă аш тĕлĕшпе выльăхăн сывлăхĕ епле пулнине çирĕплетекен ветеринари справки е клемелении свидетельстви кирлĕ;

– килти хушма хуçалăхран е фермер (хресчен) хуçалăхĕнчен илсе тухнă сĕт тата унран хатĕрленĕ продукци тĕлĕшпе выльăхăн сывлăхĕ епле пулнине тата выранти эпизоотилле лару-тăрăва çирĕплетекен ветеринари справки кирлĕ. Сутуçăн çумра çирĕплетнĕ йĕркепе панă медицина кĕнеки пулмалла;

– килти хушма хуçалăхран е фермер (хресчен) хуçалăхĕнчен илсе тухнă чăх çăмарти тĕлĕшпе чăхсен сывлăхĕ епле пулнине тата выранти эпизоотилле лару-тăрăва кăтартакан ветеринари справки е свидетельстви кирлĕ;

– хушма хуçалăхсенчен пасарсене илсе тухакан пыл валли вара ветсправкăпа пĕрлех утар тĕлĕшпе паспорт та кирлĕ;

– пулăпа сутă тума çумра ветеринари свидетельстви (справки) пулмалла;

– пасара кăларакан çĕр улми, пахча çимĕç, улма-çырла, типĕтнĕ улма-çырла, мăйăр, типĕтнĕ кăмпа тĕлĕшпе выранти патшалăх ветлабораторийĕнчен ветеринарипе санитари экспертизи кирлĕ;

– килти хушма хуçалăхран е хресчен (фермер) хуçалăхĕнчи теплицăсенчен пасара суту-илӳ тума илсе тухнă ӳсен-тăран продукцийĕн ветеринари тĕрĕслевĕ пулмалла. Кирлех пулсан лаборатори тĕрĕслевĕ те;

– тип çупа (промышленноçра хатĕрлени пулмасан) акмасăр çитĕнекен çимĕçсене, çырласене, чĕрĕ кăмпасене сутма пасарсенчи лабораторисенче илнĕ ветеринарипе санитари пĕтĕмлетĕвĕ пулмалла;

– тăварланă-йӳçĕтнĕ, маринадланă çимĕçсем валли суту-илӳ правилисене пăхăннипе пĕрлех пасарсенчи лабораторисенче илнĕ ветеринарипе санитари пĕтĕмлетĕвĕ пулмалла;

– таса михĕсене тултарнă е ытти савăтсенчи тырăсемпе кĕрпене, çăнăха сутма пасарсенчи лабораторисенче илнĕ ветеринарипе санитари пĕтĕмлетĕвĕ кирлĕ.

Обязательнăй йĕркепе сертификат кирлĕ продукцие çав сертификатсен копийĕсемпе те сутма юрать.

Паян ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе пĕрлех килти хушма хуçалăхсем те утă-улăм нумай туянаççĕ. Кун пек чух сутакансен çумĕнче асăннă продукцин ветеринари хăрушсăрлăхĕ пирки 4-мĕш номерлĕ справка е 3-мĕш номерлĕ ветсвидетельство пулмалла.

**Н. ЕГОРОВА, районти ветврач.**

Вулакансене сĕнетпĕр

## Тĕпелте: типĕ тытнă вăхăтра

Кашни ял тăрăхĕнчех харпăр хăй ĕçне чунĕпе парăннă, аслисен пурнăç йăли-йĕркине тытса пырса ыранхи куна пăхса пурăнакан çынсем, çемьесем пур. Вĕсен ӳсĕм никĕсĕнче – пĕрлехи ĕç. Хăйсен тăрăшулăхĕпе Муркаш ене малалла уттарни, ыттисене çĕнĕлĕхсем кăтартса май пур таран пулăшса пыни халăхăмăр ăш пиллĕ те ĕçчен пулнине çирĕплетет.

Черетлĕ тĕл пулура Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкассинче пурăнакан тата хăйсен килти хушма хуçалăхне тытса пыракан Эльвирăпа Анатолий Кирилловсемпе паллашрăм. Кил хуçин хăйĕн бизнесĕ пулсан, Йӳçкассинчи ватă çынсемпе инвалидсен интернатĕнче сестра-хозяйкăра ĕçлекен Эльвира Леонидовнăн килти тĕп ĕç вырăнĕ – апат тĕпелĕ. Ăшă кăмăллă хĕрарăм мăшăрĕпе пĕрле мана та сĕтел хушшине чĕнчĕ. Сисмерĕм те сĕтел хăйне евĕр тĕрлĕ апат-çимĕçпе тулса ларчĕ.

– Мăн кун типпи пынипе сире шăпах çак тапхăрта апатланмалли çимĕçсемпе сăйлас терĕм. Тиркеместĕр пулсан тархасшăн кашнинех астивсе пăхăр, хак парăр, – кăмăллăн калаçать сĕтел çине витнĕ май кил хуçи арăмĕ.

Салат та, яшка та, пăтă та кăмăла кайнăран Эльвирăран вĕсен рецепчĕсемпе интереслентĕм.

– Турра ĕненекенсем типĕ тытнине ырлатăп. Çак вăхăтри апат-çимĕç рецепчĕсем вара нумай. Эсир ыйтнине кура хам пĕлнисемпе паллаштарам эппин, – терĕ Эльвира сĕтел хушшине ларса.



**Тăварланă хăярпа йӳç кăшман (редька) салачĕ**

***Виçе:*** *тăварланă 2 хăяр, 200 г йӳç кăшман, 1 пуç сухан, 2 апат кашăкĕ тип çу, пеçукпа тăвар ирĕклĕ виçепе.*

Хуппине шуратнă йӳç кăшмана шултра терка витĕр кăларăр е çӳхе касăксем туса ваклăр. Хăяра, сухана вĕттĕн турăр. Пур çимĕçе лайăх пăтратăр та песук, тăвар, тип çу хушăр.

**Хăяр, кăмпа хушнă çĕр улми салачĕ**

***Виçе:*** *пĕçернĕ 3 çĕр улми, тăварланă 3 хăяр, тăварланă 500 г кăмпа, консервланă 100-150 г симĕс пăрçа, 0,5 стакан тип çу.*

Çĕр улмине, хăяра, кăмпана улăм пĕрчи пек тăрăхла туса ваклăр. Тип çу хушса пăтратăр. Çиелтен симĕс пăрçапа илемлетĕр.

**Йӳçĕтнĕ купăста яшки**

***Виçе:*** *500 г купăста, 1 кишĕр, çур петрушка тымарĕ, 1 пуç сухан, 1,5 апат кашăкĕ урпа кĕрпи (перловка), 1 апат кашăкĕ томат пасти, 1,5 литр шыв, тутă кĕртмелли ытти çимĕç.*

Кишĕре, сухана, петрушка тымарне турăр, тип çупа ăшаласа илĕр. Томат пасти хушса тата кăштах ăшалăр.

Купăстана кастрюле ярăр, çу, кăштах шыв хушса 1-2 сехет хушши вăйсăр çулăм çинче пăшăхлăр.

Тасатнă кĕрпене шывпа чӳхĕр те вĕрекен шыва ярса çурма пиçиччен вĕретĕр. Унтан шывне сăрăхтарăр та кĕрпене тепĕр хут чӳхĕр.

Вĕрекен шыва çак кĕрпене хушăр. Вăл вĕреме тытăнсан унта пăшăхланă купăста, ăшаланă ытти пахча çимĕç, тăвар, специсем хушса пиçсе çитиччен вĕретĕр.

**Типĕтнĕ пан улми хушнă урпа пăтти**

***Виçе:*** *1 стакан кĕрпе, типĕтнĕ пан улми, 2-3 апат кашăкĕ шур çырли сĕткенĕ, сахăр-песукпа тăвар тутине кура.*

Урпа кĕрпине малтан шӳтерĕр. Унтан тăвар хушса пĕçерĕр. Вĕттĕн туранă пан улми, сахăр песукĕ, мăк çырли сĕткенĕ хушса пиçсе çитиччен вĕретĕр, ăна вĕрилле те, сивĕлле те çиме юрать.

**Çĕр улми икерчи**

***Виçе:*** *750 г чĕрĕ çĕр улми, 750 г пĕçернĕ çĕр улми, 2-3 апат кашăкĕ ыраш, хура тул е тулă çăнăхĕ, 0,5 чей кашăкĕ сода, тăвар, тип çу.*

Чĕрĕ тата пиçнĕ çĕр улмисене вĕтĕ теркăпа хырăр. Унта çăнăх, сода тата тăвар хушса пăтратăр. Çак хутăшран икерчĕсем туса тип çупа пĕçерĕр.

**Сойăран хатĕрленĕ кофе**

Ахаль кофепе танлаштарсан сойăран хатĕрленĕ кофере тутлăхлă япаласем питĕ нумай. Унра 2060 калори пулсан, ахаль кофере вăл 1120 калори шутланать.

Кофе валли сойăна çатма çинче çу хушмасăр хăмăр тĕслĕ пуличчен ăшаламалла. Хыççăн ăна кофе арманĕпе авăртмалла, ĕçмешкĕн ахаль кофе пекех хатĕрлемелле.

**Чей**

***Виçе:*** *2 чей кашăкĕ чей, 100 г шур çырли (клюква) сĕткенĕ, 1 апат кашăкĕ пĕтнĕк (мята) çулçи, 1 л шыв, ирĕклĕ виçепе сахăр песукĕ.* Чейпе пĕтнĕке вĕри шыв хушса 10 минут лартăр. Çырлана ала витĕр сĕрсе кăларăр. Сăрăхтарнă чейне пĕтнĕк шывĕпе хутăштарăр, пăтратăр, 5 минут лартнă хыççăн сăрăхтарăр.

**А. БЕЛОВ çырса илнĕ.**

Пахчаçăн уйăх календарĕ

## Ака уйăхĕ акана чĕнет

***Ака уйăхĕ садра та, пахчара та кая юлмасăр пурнăçламалли ĕçсем пирки аса илтерет.***

### Садра

**Ака уйăхĕн 1–2-мĕшĕсем.** Улма-çырла йывăççисен вуллисем тавра органикăллă удобрени хумалла.

**Ака уйăхĕн 2–5-мĕшĕсем.** Нимĕн те акма, лартма, касма сĕнӳ çук. Йывăçсем тавра тислĕк сапалама, йывăççене сăтăрçăсенчен пĕрĕхме юрать. Крыжовника тата хурлăхана вĕри шывпа (65 градусчен) пĕрĕхмелле.

**Ака уйăхĕн 5–7-мĕшĕсем.** Садри улма-çырла йывăççисене мулкачсемпе шăшисем сурханланинчен сиплемелле. Вĕсене сыпма пуçлама юрать.

**Ака уйăхĕн 7–10-мĕшĕсем.** Улма-çырла йывăççисене сыпмалли вăхăт.

**Ака уйăхĕн 11–12-мĕшĕсем.** Улма-çырла йывăççисене сыпма юраман вăхăт.

**Ака уйăхĕн 12–14-мĕшĕсем.** Çак кунсенче акнă ешĕл курăк (газон курăкĕ) тикĕс шăтать. Улма-çырла йывăççисем сыпнине лайăх чăтса ирттереççĕ.

**Ака уйăхĕн 14–16-мĕшĕсем.** Садри участоксене иртнĕ çулхи çӳп-çапран тасатмалла. Умри ĕçсене планламалла, палăртмалла.

### Пахчара

**Ака уйăхĕн 1–2-мĕшĕсем.** Ӳсен-тăрана органикăллă удобренипе апатлантармалли вăхăт. Чернушка сухана калча валли акмалла. Сивве тӳсĕмлĕ культурăсене теплицăсене акмалла.

**Ака уйăхĕн 2–5-мĕшĕсем.** Нимĕн те акма, лартма, касма сĕнӳ çук. Юр хăвăртрах ирĕлтĕр тесен йăрансем çине торф, кĕл сапмалла. Ĕç хатĕрĕсене тĕрĕслемелле.

**Ака уйăхĕн 5–7-мĕшĕсем.** Минераллă удобренисем сапма юрать. Ир пулакан пăрăçа, физалиса калчалăх акмалла. Симĕсле çимелли культурăсене теплицăсене акма юрать. Кая юлса пулакан чечек-купăстана калчалăх акмалла.

**Ака уйăхĕн 7–10-мĕшĕсем.** Пахчара ĕçлеме юрăхсăр кун.

**Ака уйăхĕн 10–12-мĕшĕсем.** Минераллă удобренисем сапма юрать. Ир пулакан пăрăçа, физалиса калчалăх акмалла. Симĕсле çимелли культурăсене теплицăсене акма юрать.

**Ака уйăхĕн 12–14-мĕшĕсем.** Нумай çул ӳсекен сухана, пĕлтĕрхи петрушкăна иртерех симĕсле çиме пленкăпа витмелле.

**Ака уйăхĕн 14–16-мĕшĕсем.** Пулас йăрансем çине минераллă удобрени хывма юрăхлă кун. Çакăнпа пĕрлех кил хуçин кая юлмасăр пахчари çӳп-çапа пуçтармалла, умри ĕçсен планĕсене тумалла.

**(Малалли çитес шăмат кунхи номерте).**

Çĕнĕ сăвă

## Хушма хуçалăх

Кил тата хушма хуçалăх:
Пăрулянă ĕнесем,
Çурăхсем те пăранланă –
Ĕмĕртеç путексене.
Кроликсем ак çăвăрлаççĕ,
Хаваспах çине-çине.
Савăнсах ĕнтĕ пăхаççĕ
Çăвăрланă çăварне.
Çамрăк чĕпĕ йăва тупрĕ
Хăй валли йышне хушма.
Пурăнас малалла терĕ
Пурнăç ырă вăхăтра.
Хур аçийĕ те тустарчĕ
Юттине курсан паян.
«Тек ан кил кунта эс, – терĕ, –
Манăн мăшăр хам çумра».

**Егор ВАСИЛЬЕВ.**

Якаткасси ялĕ.

Сана валли, пахчаçă

## Хăçан шуратни тĕрĕсрех?

***Сад ăстисем улма-çырла йывăççине шуратни пирки тĕрлĕрен калаçаççĕ. Çапах та хăçан шуратсан тĕрĕсрех пулать-ши? Ку енĕпе сирĕн хаçат урлă сад ăстисен сĕнĕвĕсене пĕлес килет.***

**М. ПЕТРОВ.**

Чăнах та ку ĕçре кашни сад ăсти улма-çырла йывăççине шуратас пирки тĕрлĕрен шутлать. Çапах та пĕри кĕркунне, тепри çуркунне шуратать.

Шуратни йывăççене çуркунне пуçламăшĕнче хĕвел пĕçертесрен, çавăнпа пĕрлех шăши кăшласран сыхлать тесе палăртаççĕ. Вулăсене кĕркунне сыхласа çыхса хăварни йывăçа çуркунне шуратас ĕçрен хăтарать. Мĕншĕн тесен çыхăна апрель уйăхĕнче, йывăç хуппине пĕçертес хăрушлăх иртсен салтмалла.

Яка хупăллă çамрăк улмуççие шуратни сиенлĕ. Шуратнă йывăç начартарах ӳсет, унăн вулли ерипен хупăланать, хуппинчи шăтăксем питĕрĕнеççĕ, сывлăш улшăнса тăрасси вăрахланать. Çилĕмлĕ япалапа, уйрăмах йывăçа сыпăçтармалли çилĕмпе хутăштарнă известь ирĕлчĕкĕпе шуратни пысăкрах сиен кӳрет. Çитĕннĕ йывăçа известь ирĕлчĕкĕпе пачах урăх сăлтавпа шуратаççĕ. Унăн вулли кушăрка та çуркаланчăк, катрашка хупăпа витĕннĕ, вĕсенче сада сиен кӳрекен хурт-кăпшанкă пытанма пултарать. Çакăн пек йывăç вуллине ытлашши курăнакан хупăран тасатнă хыççăн кĕркунне шуратма юрать.

Çитĕннĕ йывăça çуркунне шуратни дезинфекцилени пулать. Çакă вулăпа паркка турат кăкĕнчи мăка, мăк курăкне (лишайника) пĕтерме пулăшать.

**А. ШАРИКОВ, пахчаçă.**

Миграци службинче

## Килтен учетран тухасси

***Унччен вăхăтра ют çĕр-шыв гражданинĕ вăхăтлăх пурăннă вырăнтан тухса кайнă чух ăна йышăннă енĕн ун пирки миграци службине регистраци хучĕн пĕр пайне килсе памалла пулнă. Халĕ çакă ансатланнă теççĕ. Каласа памăр-ши?***

**Р. МАГОМЕДОВ.**

**Асăннă ыйту çине хурав пама хамăр тĕпеле федераллă миграци службин районти территори пункчĕн пуçлăхне З. СОРОКИНĂНА чĕнтĕмĕр:**

– Чăнах та кăçалхи нарăсăн 15-мĕшĕччен çак ĕçсенче вăхăтлăх регистрацие вăй хунă ют çĕр-шыв гражданинĕ е гражданствăсăр çын регистрацирен тухнă чух вăл тухса кайни пирки ĕç хуçин те йышăннă чухнехи хутăн пĕр пайне миграци службине памаллаччĕ. Иртнĕ çулхи раштавăн 23-мĕшĕнче йышăннă тата кăçалхи нарăсра вăя кĕнĕ «Раççейри уйрăм саккун акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» федераллă саккун çак йĕркене пăрахăçларĕ.

Милици хроники

# Янтти пыра лармĕ-и?

Чăнах та хăш чухне янтти пыра ларма пултарать. Çавăнпа та хăв тар юхтарса ĕçлесе тунине нимĕн те çитмест, анчах çакна пурте ăнкараймасть çав. Акă мартăн 22 – 23-мĕшĕсенче паллă мар çын Анат Хачăк ялĕнчи пĕр хуçалăхри котельнăй кантăкне çĕмĕрсе кĕнĕ. Унта вара тĕрлĕ çимелли куç тĕлне пулнă. Ытла та çиес килнĕ самантрапепле чăтса тăрăн-ха? Çапла вара ют çыннăнне тиркемен «кукăр алă» 1 литр кĕрекен кĕленчĕри тип çу, 2 литр кĕрекен савăтри йӳçĕтнĕ купăста, 5 штук чăх çăмарти вăрласа тухнă. Халĕ ку тĕлĕшпе йĕрке хуралçисем ĕçлеççĕ, унта хăварнă пӳрне йĕрне ӳкерсе илнĕ те ĕнтĕ. Апла пулсан çитес вăхăтрах вăрă пирки ыттисем те пĕлĕç-ха.

# 20 метр тăршшĕ кабель ăçталла тăсăлнă?

Ют çын пурлăхне вăрланипе мала каяймăн-ха. Анчах мĕншĕн-ха вăл хăй патне илĕртет-ши? Мартăн 26 – 28-мĕшĕсенче «Ударник» хуçалăхăн пĕр çуртне паллă мар çын кĕнĕ, унтан 20 метр тăршшĕ кабель вăрласа тухнă. Çапла вара ют пурлăха хапсăнакан хуçалăха 3312 тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ. Çапах та ун хыççăн хăш-пĕр йĕр юлнах-ха. Халĕ ку тĕлĕшпе РФ УК 158 статйипе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать. «Кукăр алăллă» çын малашлăх пирки шутланипе канлĕ ыйхăпа та çывăраймасть пулĕ-ха?

# Çын çине алă çĕклекен хăй те ...

Икĕ пĕчĕкçĕ автан тытăннă ирех вăрçма паян, тет пĕр сăвăра. Ку тĕслĕхри Муркаш сали «автанĕсем» вара Москакассинчи «Илем» кафе умĕнче çĕрле çапăçма тытăннă. 1981 çулта çуралнă арçын хăйĕнчен аслăрах арçынна хĕненĕ. Мĕн хĕтĕртнĕ-ши вĕсене çапла майпа вăй виçме? Халĕ ку тĕлĕшпе РФ УК 116 статйин 1 пайĕпе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Ял тăрăхĕсенче

# Ăмăрту – ентеш ячĕпе

Иртнĕ шăмат кун Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне, «Герой» хуçалăха ертсе пынă А.Н. Иванова асăнса Шурчари тĕп шкулта спорт ăмăртăвĕ иртрĕ. Алексей Николаевичпа ĕçлеме тӳр килнисем, ăна лайăх пĕлекенсем район аталанăвĕнче унăн тӳпи пысăк пулнине палăртрĕç. Çакна А. Иванов çинчен шкулти музейра пухнă материалсем те çирĕплетсе параççĕ.

Ăмăрту спортăн тăватă тĕсĕпе иртрĕ: волейбол вăййисем, кире пуканне çĕклесси, армспорт тата канат туртасси. Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи ултă команда вăй виçрĕ.

Волейболла выляса Кӳстерексем мала тухрĕç. Ăмăртура кире пуканĕ 71 хут çĕкленĕ Петр Халапсина çитекенни тупăнмарĕ. Сăмах май Петр пĕлтĕр Патăрьел районĕнче, кăçалхи февральте Çĕмĕрле районĕнче иртнĕ ăмăртусен призерĕ. Хĕрарăмсем хушшинче спортăн ку тĕсĕнче Екатерина Иванова çĕнтерӳçĕ пулчĕ. Ветерансен ретĕнче ăмăртнă И. Смоленцев, Н. Алексеев, О. Бардасова тата С. Павлова та малтисен ретĕнче пулчĕç. Армспорт ăмăртăвне курма та питĕ интереслĕ пулчĕ. Алă кĕрешĕвĕсем В. Сорокинăпа Н. Тимофеевăн алă вăйĕ ытларах пулнине кăтартса пачĕç. Канат туртассипе Шурчасем маттур пулчĕç. Пĕтĕмĕшле кăтартусем тăрăх куçса çӳрекен кубока Кӳстерексем тивĕçрĕç.

Ăмăртăва хутшăннă пур командăна та дипломсемпе укçан парнесем парса чысларĕç. Йĕркелӳçĕсемпе спонсорсене – «Герой» хуçалăх председательне Р. Тимофеева, районти ветстанци ертӳçине Н. Яковлева, В. Бардасов уйрăм предпринимателе, республикăри армспорт федерацийĕн ертӳçине И. Смоленцева, Шурча шкулĕн коллективне тата Алексей Николаевичăн ывăлне Ю. Иванова (Шупашкарти «Империя К» чикĕллĕ яваплăхлă общество директорĕн çумне) – ял тăрăхĕнче çакăн пек чаплă спорт уявĕ ирттернĕшĕн пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Т. ЕРМОЛАЕВА.**

Пирĕн почта

# Вулакансем пĕлтереççĕ

**Редакциренi: паян сире, хисеплĕ вулакансем, редакцие килнĕ черетлĕ çырусемпе паллаштаратпăр. Районăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пулса иртни çинчен пĕлсе хăвăрăн тăрăхра иртекен мероприятисем çинчен, чуна пăшăрхантаракан ыйтусене çырса пĕлтерĕр. Вĕсемпе пĕрле паллашăпăр, ыйтусене хурав тупса сӳтсе явăпăр.**

Мăн Токшикри Культура çурчĕ çумĕнчи «Тăванлăх» фольклор ушкăнĕ Тойкилтĕре пуян та пысăк программăллă концерт лартса пани пирки **А. Яруткова** çырса пĕлтерчĕ. «Таçта çитсен те тăванлăх ятне ярас çук вĕсем. Чăвашлăха, тăванлăха хисеплеме, упрама пĕлеççĕ иккен пирĕн кӳршĕсем. Чăваш халăхĕн юрри-ташшине, унăн культури пирки манманни савăнтарать», – тет çыру авторĕ. Çак фольклор ушкăнне вăтăр ытла çын çӳрет. Чылайăшĕ çемйипех çӳрет иккен: Емельяновсем, Ивановсем, Егоровсем, Федоровсем, Валькосем. Пысăк коллектива Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н. Кондукторова ертсе пырать. «Тăванлăха» ырă кăмăллă та ĕçчен, пĕр шухăшлă çынсем пухăннă. Вĕсем çинчен лайăххине çырса та пĕтерес çук», – тесе Тойкилтĕри А. Яруткова кӳршисене сывлăх сунать.

Тепĕр çыру – Орининти вăтам шкулта пултаруллă ĕçченсем пулни çинчен. «Орининти Культура çурчĕ çумĕнчи «Шуракăш» юрăпа ташă пултарулăх ушкăнне çӳрекенсен пĕр пайĕ – вĕрентекенсем», – тесе пĕлтерет **И. Скворцова.** Пуçламăш классене вĕрентекен Т.С. Горшкова, Н.Р. Иванова, Р.Л. Мокшанова, Ф.П. Александрова, Т.П. Алексеева математика учителĕ, физика предметне вĕрентекен И.Г. Скворцова, Л.В. Курбанова аслă вожатăй, малтан Орининти шкулта, халĕ Атапай шкулĕнче ĕçлекен Ю.Г. Скворцов – çаксем вĕсем пултарулăх ушкăнне хаваспах çӳрекен хастар вĕрентекенсем. Учительсем хăйсен ĕçĕнче те маттур, культура ĕçĕнче те правур. Вĕсене автор иртнĕ Театр кунĕпе те саламлать.

«Солнышко» ача сачĕн воспитателĕ **О. Петрова** та – редакципе тачă çыхăну тытакансенчен пĕри. Ку хутĕнче вăл «Единая Россия» парти йĕркеленĕ «Ача сачĕсем – ачасем валли» Пĕтĕм Раççейри конкурс пирки çырса пĕлтерчĕ. Конкурс çĕр-шывăн пур субъектĕнче те иртнĕ. Унта хутшăнакансене тĕрлĕ номинацисенче хакланă. Çапла вара «Путене» ача сачĕ «Ялти чи лайăх ача сачĕ» номинацире 2-мĕш вырăн йышăнма пултарнă. «Солнышко» çак номинацирех 3-мĕш пулнă. «Путенере» вăй хуракан О.Ю. Прокопьева «Ача садĕнчи чи лайăх воспитатель» номинацире лауреат ятне тивĕçнĕ. Çыру авторĕ О.Г. Петрова та конкурсран çак ятпах таврăннă.

Спорт

# Черетлĕ çитĕнӳ

Мартăн 29-мĕшĕнче Сосновка поселокĕнче ачасемпе çамрăксен 10 № спорт шкулĕн йĕлтĕр базинче «Олимп шанăçĕсем» ятпа спорт ăмăртăвĕ иртрĕ. Уçă ăмăртура пирĕн тата кӳршĕ республикăсен йĕлтĕрçисем вăй виçрĕç.

Муркашри В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕнчи И. Смирновпа Н. Степанов тренерсен воспитанникĕсем те ăмăртăва хутшăнчĕç. Çатракассинчи вăтам шкулта вĕренекен Стас Степанов 2000 çулта çуралнă арçын ачасен ӳсĕмĕнче ăмăртса финиша иккĕмĕш çитме пултарчĕ. Командăри ытти çамрăк спортсменсем те ăмăртăва япăх мар кăтартусемпе вĕçлерĕç.

**А. ПЕТРОВ.**

**Администрация Моргаушского района доводит до сведения граждан, проживающих на территории района о том, что закреплен лесосечный фонд в целях заготовки древесины для собственных нужд в следующих лесничествах и объемах.**

**Распределение лесосечного фонда на 2011 год**

**(куб.м.)**

| Наименование государственных учреждений лесного хозяйства | в защитных и эксплуатационных лесах | | | |
|---|---|---|---|---|
| | Всего | в том числе | | |
| | | хвойных пород | твердолиственных пород | мягколиственных пород |
| Ибресинское | 600 | 100 | | 500 |
| Чебоксарское | 1700 | 1300 | | 400 |
| Шумерлинское | 800 | 300 | | 500 |
| Ядринское | 720 | | 200 | 520 |
| **Итого** | **3820** | **1700** | **200** | **1920** |

**Чтобы заключить договор купли-продажи лесного фонда с вышестоящими лесничествами, следует получить справку о строительстве и наличии земельного фонда в сельских поселениях.**

**Телефон: 62-3-41**

**Администрация Моргаушского сельского поселения сообщает, что публичные слушания, прошедшие 30.03.2011 г. в 15 ч. 00 мин., считаются недействительными.**


В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы, грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады). Питание, проживание предоставляются. Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная). Тел.: 8(8352)23-22-22. 4-4.

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок. Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778. Песок, ОПГС (гравмасса), щебень. Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440. Доставка миксерами, самосвалами. 9- 50**

Дом Культуры **2 марта** с **12** до **13**

РАДУГА ЗВУКОВ

**СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ**

ЗАУШНЫЕ, КАРМАННЫЕ (пр-во Россия)

Цена: от **4500** до **7000** руб. (Запчасти)

***ЦИФРОВЫЕ*** (пр-во Дания, Германия)

Цена: от **8 000** до **12 000** руб. **ПОДБОР**

ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ

НЕОБХОДИМА КОНСУЛЬТАЦИЯ СПЕЦИАЛИСТА

Ультразвуковые стиральные машинки

Цена: от **1900** до **3500** руб.

Товар сертифицирован. Гарантия. **Скидки.**

ВЫЕЗД СПЕЦИАЛИСТА НА ДОМ БЕСПЛАТНО

**Справки по тел: 8-901-866-81-57**

Св-во 304183133700096, от 25.03.2004, г. Ижевск


**Прогноз погоды со 2 по 8 апреля 2011 года** www.yandex.ru

| сб 2 | вс 3 | пн 4 | вт 5 | ср 6 | чт 7 | пт 8 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ясно | облачно с прояснениями | ясно | облачно | облачно, небольшой дождь со снегом | облачно, небольшой дождь со снегом | ясно |
| -1 | +5 | +5 | +4 | +3 | +2 | +2 |
| -6 | +1 | -1 | +2 | +1 | -1 | -4 |

# Пĕлтерӳсем. Объявления


**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-10.**


МОУ «Моргаушский лицей» проводит конкурсный отбор – олимпиаду среди учащихся 9-ых классов общеобразовательных школ Моргаушского района для поступления в 10 класс лицея. Для учащихся, желающих поступить в МОУ «Моргаушский лицей» на естественнонаучное направление, олимпиада проводится по математике и физике, на гуманитарное направление – по русскому языку и истории России.

Для желающих стать кадетами – дополнительно по физкультуре (бег – 100 и 1000 м; подтягивание – юноши, отжимание – девушки). Олимпиада проводится с 17 апреля 2011 года в 10.00 часов.

Заявления принимаются до 15 апреля 2011 года.

По всем вопросам обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 34, тел.: 62-1-49.

***


**Комбикорма, отруби, ячмень. Доставка от 1 т. Тел.: 89279920519. 4-5.**

***

**Проекты домов, электро- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс». с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03. 5-5.**

***

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 5-9.**

***

**Куплю предметы старины: монеты до 1961 г., марки, книги, до 1900 г., нагрудные знаки и жетоны, колокола и т.д. Дорого. Тел.: 89373758855.**

***

**23-27 кг таякан, 250 тенкĕ тăракан тюкланă утă сутатăп. Тел.: 89603138668.**

***

**Ĕне, вăкăр, тынашки, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-342-39-43. 4-5.**

***

**Бурение скважин на воду, установка, монтаж, доставка колец диаметром 1 м. Тел.: 8-903-066-76-49; 8-906-385-44-75. 3-5.**

***

**Грузоперевозки по ЧР, РФ. Газель, фермер, 6 мест., удлин., 1,5 т, тент. Тел.: 8-927-847-53-91. 1-2.**

***

**Приглашаем Вас на массажную кровать «Нуга Бест». В честь открытия первый массаж каждому бесплатно. Исправляет осанку и искривления позвоночника. Снижает вес, удаляет целлюлит. Нормализует обмен веществ, сон, давление. Уменьшает боли в суставах, в руках, в ногах, спине. Снимает стресс и депресию. Очищает кровь, снимает уровень сахара и холестерина. Мы находимся в ФСК «Сывлăх». Тел.: 8-987-664-57-63. Эльза.**

***

**Продаются овцы романовской породы, свинина беконная. Цена договорная. Тел.: 89373841041; 89196632409. 2-5.**

***

**Халăхран хаклă хакпа ĕне, вăкăр, тына ашăн е чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 89196719626. 7-10.**

***

**В д. Юнгапоси на территории МСО «Моргаушская» открылся магазин«СЕЛЬХОЗЗАПЧАСТИ». Тел.: 89603048267. 5-9.**

***

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 60-7-10, 8-905-345-60-63. 2-5.**

***

**Продаю пропаренные качественные керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, керамзит, цемент. Адрес: «Моргаушагропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 1-5.**

***

**ТЦ «Лотос» продает: трубы для ограды, профнастил, сетку- «рабицу», профили, мет. двери и ворота, банные печи, мотоблоки, косилки. Изготовление, доставка, установка. Тел.: 8-9176652726. 4-5.**

***

**С 1 апреля начинает работать «ШИНОМОНТАЖ» на территории станции юных техников с. Моргауши. Ремонт стиральных машин-автоматов с выездом на дом. Парикхмахерская «ШАРМ» оказывает все виды парикмахерских услуг: любая жен. и муж. стрижка – 100 руб., дет. стрижка – 50 руб. Тел.: 8-953-010-21-34, 8-962-599-04-70.**

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». 6700 р. – 94 канала! Записывает. 6500 р. – отдельно ресивер. Кредит, гарантия, доставка. Тел.: 89063852930. 1-2**

**Кредитному потребительскому кооперативу требуется кредитный специалист для работы в отделении в с. Моргауши. Требования – высшее экономическое образование, опыт работы по специальности, возраст до 40 лет, знание экономики района и его жителей, знание бухучета, коммуникабельность, ответственность, уверенный пользователь ПК (Word, Excel, Internet). Резюме отправлять по адресу: sodrugestvo21@mail.ru. Возьмем в аренду офисное помещение в центре с.Моргауши площадью до 20 кв.м. Контактный телефон 8-952-029-38-69. 4-6.**

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». Установка, гарантия. 6800 руб. Тел.: 8-905-345-77-19. 3-7.**





Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕпе вĕренекенсем кунта 37 çул техслужащире ĕçленĕ

**Зоя Васильевна ВАСИЛЬЕВА**

вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле таранăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 1.04.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4327.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.